Ватă çынсен кунне хатĕрленсе

Кашниех куллен тимлĕх туйса тăтăр

Çулленех октябрĕн 1-мĕшĕнче Ватă çынсен пĕтĕм тĕнчери кунне паллă тăватпăр. Паллă ĕнтĕ, хăй вăхăтĕнче шанса панă ĕç вырăнĕнче ырми-канми ĕçленĕ çынсем тимлĕхсĕр юлма тивĕç мар. Çавна май район администрацийĕн пуçлăхĕн йышăнăвĕпе 2008 çулта Ватă çынсен пĕтĕм тĕнчери кунне тата «Ăрусен çыхăнăвĕ» акци ирттерессипе туса ирттермелли ĕçсен план-мероприятине çирĕплетнĕ.

Çак куна халалласа туса ирттерессипе çыхăннă мероприятисем пирки район администрацийĕнче сентябрĕн 25-мĕшĕнче семинар-канашлу иртет. Унта ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем, ветерансен канашĕсен, старейшинăсен канашĕсен, хĕрарăмсен канашĕсен председателĕсем хутшăнаççĕ.

Вырăнсенче ватă çынсене чысласси октябрĕн 1-мĕшĕнче пулса иртмелле. Унта район администрацийĕн ответлă ĕçченĕсем, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем те хутшăнаççĕ.

Кунпа пĕрлех çакăн пирки те манмалла мар. Хальхи вăхăтра ватă çынсем хушшинче тивĕçсĕр условисенче пурăнакансем те çук мар. Çавна май пĕччен пурăнакан ватă çынсен пурнăç условийĕсене тĕрĕслесе тăрас ĕçсене те туса пыма сĕннĕ. 90 çул тултарнă тата аслăрах çынсене вара килĕсенче саламлама йышăннă. Кунпа пĕрлех çулланнă çынсене акса-лартса хăварнă çимĕçсене пухса кĕртме, хĕле хатĕрленессипе туса ирттермелли ĕçсенче тата çурт-йĕре хăт кĕртессипе пулăшасси пирки те манмалла мар. Ку енĕпе шкулсенче вĕренекенсем те пысăк пулăшу пама пултараççĕ.

Октябрĕн 1-мĕшĕнчех ялсенчи Культура çурчĕсемпе библиотекăсенче массăллă культура мероприятийĕсем пулса иртĕç. Кусем вĕсем тӳлевсĕр концертсем, киносеанссем т. ыт. те. Октябрĕн 1-мĕшĕнче ватă çынсене тӳлевсĕр апат çитерессине палăртнă. «Ăрусен çыхăнăвĕ» акципе килĕшӳллĕн экономикăпа социаллă сфера отраслĕсенче ăрусен тĕл пулăвĕсем те çав кунах пулса иртĕç.

Шкул ачисем хутшăннипе пулса иртекен мероприятисем те сахал мар. Ватă çынсен кунне хатĕрленсе ирттернĕ май шкул ачисем вăрçă ветеранĕсемпе, тыл ĕçченĕсемпе, ытти ватă çынсемпе тĕл пулĕç, «Вĕсем санпа юнашар пурăнаççĕ» ятпа пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсенче ӳкерчĕксен конкурсĕ иртĕ, ватă çынсен интереслĕ шăписем пирки тата «Манăн асаттепе асанне», «Ватта сума сăвакан хăй те сумлă пулакан» ятсемпе шкул ачисен сочиненийĕсен конкурсĕсем пулĕç. Шкул ачисем «Манăн йăх тымарĕ» альбомсем хатĕрлеççĕ.

Ыр кăмăллăх декадин шучĕпе çителĕксĕр пурăнакан ватă çынсене пулăшма укçа-тенкĕ, япаласем, апат-çимĕç пухассине йĕркелеме пăхнă.

Ватă çынсен пĕтĕм тĕнчери кунне хатĕрленессипе тата ăна ирттерессипе çыхăннă ĕçсем, ыр кăмăллăх декади, «Ăрусен çыхăнăвĕ» акци епле иртни пирки район хаçатĕнче пĕлтерсех тăрăпăр.

А. АНДРЕЕВА,
район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, культура тата архив ĕçĕсен пайĕн пуçлăхĕ.

Партисен пурнăçĕнчен

«Единая Россия» парти майлисен йышĕ ӳсет

Сентябрĕн 10-мĕшĕнче Мускавра «Единая Россия» партин идеологи ĕçĕ-хĕлĕн тĕп çул-йĕрĕсем» семинар иртнĕ. Унта ВЦИОМ генеральнăй директорĕ Валерий Федоров та хутшăннă. Вăл «Единая Россия» парти тĕлĕшпе ыйтса пĕлнин тĕпчевĕсене илсе кăтартнă:

– Кашни канмалли кунсенчех пирĕн çынсем 150 ялти 1600 çын патне çитме ĕлкĕреççĕ. Чи сумлисенчен «Единая Россия» малти вырăнта тăрать. Ыйтса пĕлнисенчен 33 проценчĕ партин ĕçĕ-хĕлĕ пирки сăнаса тăнине, 58 проценчĕ унăн ĕçĕхĕлĕ пирки пĕлсе тăнине пĕлтерчĕ.

Йăлана кĕнĕ çакăн пек ыйту та пулчĕ: «Çак вырсарни кун суйлав пулнă пулсан, эсир камшăн сасăланă пулăттăр?» Ыйтнисенчен 61 проценчĕ «Единая Россия» партие суйласа илессине пĕлтерчĕ. Кунпа пĕрлех çак парти майлисен йышĕ ӳссе пынине те палăртмалла. Енчен те 2004 çулта «Единая Россия» партишĕн çынсен 46 проценчĕ пулнă пулсан, 2008 çулта – 61 процент. Апла пулсан ыйтса пĕлнисен 2/3 пайĕ «Единая Россия» партишĕн.

Эпир кунпа пĕрлех ку е вăл парти мĕнле идейăсемпе ăсхакăл ыйтăвĕсене хаклани пирки те ыйтса пĕлтĕмĕр. Ыйтса пĕлнисенчен 36 проценчĕ «Единая Россия» партин тĕп хаклăхĕ вăл патшалăха, йĕркелĕхпе тăнăçлăха çирĕплетесси тесе шутлать. Çынсен 18 проценчĕ ку партирисен тĕп тĕллевĕ хăватлă Раççей çĕршывне туса хурасси тесе шутлать. Апла пулсан Раççей çĕршывĕнче пурăнакансем шутланă тăрăх ку парти патшалăх консервативлă анчах мар, социаллă тĕрĕслĕхшĕн те тăрăшать.

Парти пирĕн обществăн пур сийĕсенче те малти вырăнсенче тăрать. Унăн майлисем 18–24 çулхисем хушшинче 60 процент шутланаççĕ. 25–34 çулхисем хушшинче те ку кăтарту çавăн пекех. Аслăрах çулхисем хушшинче те кăтарту нумаях улшăнмасть. Çапла вара партин позицийĕсем çынсем хушшинче вăтамран 1,5 хут ӳснĕ.

«Единая Россия» аслă тата тулли мар аслă пĕлӳ илнисем хушшинче малти ретре тăрать. Ун майлисем кунта 64 процент. Округсемпе илес пулсан, Тĕп федераллă округра ун майлисем 63 процент, Çур çĕр-Хĕвел Анăç округĕнче 60 процент, Атăл тăрăхĕнче 55 процент, Уралта 57 процент, Кăнтăрта тата Çĕпĕрте 54 процент, Инçет Хĕвел Тухăçĕнче 53 процент шутланаççĕ.

Вырăнтисем вара 52 процент «Единая Россия» активлă ĕçлесе пырать тесе шутлаççĕ.

Обществăлла йышăну пункчĕсем уçнине ыйтса пĕлнисен 47 проценчĕ лайăх енчен палăртать. Вĕсен виççĕмĕш пайĕ Владимир Путинăн обществăлла йышăну пункчĕсене пыма хатĕррине палăртрĕ. Çакă халăх ку партие шаннине лайăх кăтартса парать.

Цифрăсен чĕлхипе

Промышленность енĕпе ӳсĕмсем сулмаклăрах

Кăçалхи сакăр уйăхра районĕпе 254 ача çуралнă. Ку вăл пĕлтĕрхи çав вăхăтринчен 23 ача сахалрах. Вилекенсем 425 çын пулнă. Пĕлтĕр çак тапхăрта вара 456 çын вилнĕ.

Пĕтĕмпе районĕпе 1193916,9 пин тенкĕлĕх продукци туса хатĕрленĕ. Пĕлтĕрхи çав вăхăтрипе танлаштарсан вăл 194,3 процент пулать. Вăл шутран ял хуçалăх продукцине 224223,8 пин тенкĕлĕх (118,5 процент), промышленность тата продукци тирпейлекен промышленность продукцине 969693,1 пин тенкĕлĕх (228,0 процент) туса илнĕ. Уйрăмах ăнăçлă ĕçлекен промышленность предприятийĕсем шутĕнче Муркашри кирпĕч завочĕ (67167,0 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларнă – 193,3 процент), «Муркаш издательство çурчĕ» республика патшалăх учрежденийĕ (1400,8 пин тенкĕ – 142,2 процент), «Сундырь-Хлеб» чикĕллĕ яваплăхлă общество (21943,0 пин тенкĕ – 131,7 процент), «Муркашри сĕт-çу завочĕ» уçă акционер обществи (71372,0 пин тенкĕ – 240,1 процент), «Сеспель» хупă акционер обществи (691975,1 пин тенкĕ – 290,9 процент), «Моргауши-Хлеб» чикĕллĕ яваплăхлă общество (13826,0 пин тенкĕ – 151,7 процент), хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийĕ (16126,0 пин тенкĕ – 144,5 процент), «Моргаушимежрайгаз» филиалĕ (26741,0 пин тенкĕ – 120,5 процент).

Пĕтĕмĕшле тупăш 69293,0 пин тенкĕпе танлашнă. Иртнĕ çул çав тапхăрта вăл 34655,3 пин тенкĕ пулнă. Вăл шутран ял тăрăхĕсен тупăшĕ 11492,6 пин тенкĕ (186,5 процент) пулнă.

Тӳлевлĕ пулăшусем 36946,2 пин тенкĕлĕх панă е унччен çулхипе танлаштарсан 102,9 процент. Вăл шутран пурăнмалли çуртйĕрпе коммуналлă хуçалăхăн ертсе пыракан компанийĕ 8863,4 пин тенкĕлĕх (102,7 процент), «Моргаушрайбыт» чикĕллĕ яваплăхлă общество 3096,8 пин тенкĕлĕх (106,3 процент), ытти предприятисем 14248,0 пин тенкĕлĕх (106,2 процент).

Ваккăн сутмалли тавар çаврăнăш калăпăшĕ 389327,7 пин тенкĕпе танлашнă (143,6 процент). Вăл шутран Мăн Сĕнтĕр районĕпе ку кăтарту 121693,0 пин тенкĕпе (155,9 процент), Муркаш районĕпе 196857,0 пин тенкĕпе (158,8 процент) танлашнă.

Обществăлла апатлану предприятийĕсем ӳсĕмлĕ ĕçлесе пынине палăртмалла. Мăн Сĕнтĕр районĕпе ку кăтарту 2432,0 пин тенкĕпе (127,8 процент), Муркаш районĕпе 16218,0 пин тенкĕпе (127,7 процент) танлашать.

Чĕрĕ виçепе аш-какай 4173,0 тонна (112,3 процент) туса илнĕ. Вăл шутран ял хуçалăх предприятийĕсенче 1462,8 тонна (79,1 процент), хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче 76,2 тонна (82,8 процент), уйрăм çынсен хушма хуçалăхĕсенче 2634,0 тонна (148,6 процент).

Ĕнесенчен пĕтĕмпе 33250,1 тонна (117,5 процент) сĕт суса илнĕ. Вăл шутран ял хуçалăх предприятийĕсенче 7357,4 тонна (85,3 процент), хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче 71,4 тонна (34,7 процент), уйрăм çынсен хушма хуçалăхĕсенче 25821,3 тонна (132,6 процент). Кашни ĕне пуçне сĕт суса илесси районĕпе вăтамран 3129 килограмма (119,8 процент) танлашнă. Ял хуçалăх предприятийĕсенче кашни ĕне пуçне вăтамран 2671 килограмм (унччен 2627 килограмм пулнă) сĕт суса илнĕ.

Самăртма хупнă мăйракаллă шултра выльăхсем талăкра вăтамран 527 грамм (пĕлтĕр 557 грамм пулнă), сыснасем 337 грамм (333 грамм пулнă) ӳт хушнă. Пĕтĕмпе ĕнесенчен 1644 пăру (84,7 процент), сыснасенчен 10603 çура (66,8 процент) илнĕ.

Уçă куракан кашни 100 гектар çĕр пуçне 66,2 центнер (112,2 процент) аш-какай, вăл шутран ял хуçалăх предприятийĕсенче 33,6 центнер (80,0 процент), сĕт 527,8 центнер (117,5 процент), вăл шутран ял хуçалăх предприятийĕсенче 169,2 центнер (86,3 процент) туса илнĕ.

Ял çыннисенчен 3711,8 тонна (120,8 процент) сĕт сутăн илнĕ. Вăл шутран ял хуçалăх предприятийĕсем 98,4 тонна, Муркаш райповĕ 1396,3 тонна (130,6 процент), Мăн Сĕнтĕр райповĕ 810,1 тонна (112 процент) сĕт сутăн илнĕ.

Аш-какай 784,7 тонна сутăн илнĕ (100,2 процент). Муркаш райповĕпе ку виçе 37,9 тоннăпа (48 процент), Мăн Сĕнтĕр райповĕпе 42,8 тоннăпа (55,9 процент) танлашать. Предпринимательсемпе заводсем ăнăçлăрах ĕçленĕ, 704,0 тонна аш-какай сутăн илнĕ (112,1 процент).

Строительствăра 227158,0 пин тенкĕлĕх (105,9 процент) инвестицисемпе усă курнă. Вăл шутран харпăр хăй çуртйĕрне тунă çĕрте 203710,0 пин тенкĕпе (130,5 процент).

Çулсем çĕнĕрен тăвасси тата киввисене юсасси 6,35 километрпа (179,9 процент) танлашнă. Вăл шутран çĕнĕ çулсем 2,1 километр (201,9 процент) хута янă.

Районĕпе ĕçсĕррисем 93 çын шутланаççĕ. Ку вăл пĕлтĕрхи çав вăхăтринчен 31 процент нумайрах. Ĕçсĕрриссен шайĕ 0,43 процентпа танлашать.

Э. СИМАКОВА,
район администрацийĕн экономика пайĕн пуçлăхĕ.

Ял культури – çĕр ĕçченĕн культури

Ĕçре пĕрле пулни вăй-хал парать

Кăçал пирĕн районта ирттернĕ Республика кунĕ Кашмашсемшĕн яланлăхах асра юлĕ. Июнĕн 23-мĕшĕнче кунта республикăра чи пĕрремĕш модернизациленĕ база Культура çурчĕ уçăлчĕ. Çакă ыт ахальтен мар. Юлашки çулсенче Кашмашра çĕнĕ Культура çурчĕ хута кайнипе пĕрлех кунта ял халăхне культура ыйтăвĕсемпе тивĕçтересси те çĕнĕ шая çĕкленчĕ. Культура çурчĕ çумĕнчи драма коллективĕн пултарулăхĕ районта хăйĕн вырăнне тупрĕ, кунти халăх пултарулăх ушкăнĕ те – куракансемшĕн ялан кĕтнĕ хăна. Çак ĕçсене анлăн явăçакан ял çынни те ял-йышпа, район çынсемпе тĕл пуласран пăрăнмасть. Акă иртсе пыракан вырма тапхăрĕнче те вĕсем ĕçлекенсем çине пăхса тăрассипе çеç килĕшмерĕç. Иртен пуçласа каçчен хирте те йĕтем çинче вăй хуракансене çĕнĕ ташă-юрăпа, сăвăсемпе те шӳтпе савăнтарчĕç, ĕçлес кăмăла ӳстерчĕç.

Вĕрентӳ ĕçĕн ветеранĕсем Галина Павловнапа Николай Алексеевич Ершовсем Кашмашри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта пĕрремĕш çул мар ĕçлеççĕ. Галина Павловна паян шкул директорĕ, Николай Алексеевич директорăн вĕрентӳпе воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕ. Вĕрентӳ ĕçĕпе пĕрлех чăваш халăх ташши-юрринчен те аякра тăмаççĕ вĕсем **(пĕрремĕш сăн ӳкерчĕкре)**.

Çатракассинчи вăтам шкулти Наталья Михайловна Ерзукова хореографпа Кашмашри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул ĕçченĕ Тамара Леонидовна Цвыга **(иккĕмĕш сăн ӳкерчĕкре)** пушă вăхăтра ташă-юрăпа туслă, иккĕшĕ те ялти театр артисчĕсем.

– Çын çăкăрпа çеç тутă пулаймасть тени пирĕнтен тухнă сăмах мар. Ĕçлекене вара кашнин тивĕçлипе чыслама пĕлмелле. Çак тĕллевпе тухрăмăр та ĕнтĕ эпир вырма вăхăтĕнче хире, йĕтем çине, – терĕç Наталья Михайловнапа Тамара Леонидовна черетлĕ концерт хыççăн.

... Урамра кĕрхи сивĕ çумăр пĕрĕхет. Ĕçе вăхăтра вĕçленисем паян ăшă пӳртре лараççĕ, çĕнĕ тĕллевсем палăртаççĕ.

Анатолий БЕЛОВ.
Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.